# МАЛАЛЛА УТАР

*Ф. Павлов*



# МАЛАЛЛА УТАР

*Ф. Павлов*

1. Малалла утар, харăс пусар,
Пĕрлешсе ĕçре ыр курар.
Харăс, харăссăн утар,
Хĕрлĕ ялав, хĕрлĕ ялав айĕнче.

2. Малалла пăхсан çерем выртать,
Ешĕл курăклă хир выртать.
Харăс, харăссăн утар,
Хĕрлĕ ялав, хĕрлĕ ялав айĕнче.

3. Тракторпа тухса çерем авар,
Сарă тул вăрри, ай, акар.
Харăс, харăссăн утар,
Хĕрлĕ ялав, хĕрлĕ ялав айĕнче.

4. Сарă тулă пулĕ сӳремесĕр,
Пĕрчийĕ пулĕ хисепсĕр.
Харăс, харăссăн утар,
Хĕрлĕ ялав, хĕрлĕ ялав айĕнче.

5. Кĕркунне пухса хаклă сутар,
Совет хыснине пуйтарар.
Харăс, харăссăн утар,
Хĕрлĕ ялав, хĕрлĕ ялав айĕнче.